27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ИЮНЬ 10 ШАМАТКУН 114(6609) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕТĔН ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июнĕн 8-мĕшĕнчи оперативнăй сводка

Июнĕн 8-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Июнĕн 7-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 15 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 22 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Яссы хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата çурçĕртерехре пирĕн подразделенисем хăйсен позицийĕсене лайăхлатассишĕн çапăçнă. Пĕр чăсри боецсем пĕр пахча çÿллĕ вырăна туртса илнĕ. Нимĕçсем çав çÿллĕ вырăна каялла туртса илме хăтланса пăхнă, анчах вĕсен ĕçĕ ăнăçлă пулман. Нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне çити тата тăшманăн темиçе танкне пĕтерсе тăкнă. 150 гитлеровеца тыткăна илнĕ.

* * *

Тирасполь хулинчен кăнтăртарахра пирĕн разведчиксем тăшман траншейисене çав тери хăвăрттăн вăркăнса кĕрсе кайнă та вĕсене нимĕçсенчен туртса илнĕ. Çак çапăçура нимĕçсен пехотине пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра тăшманăн 40 разведчикĕ Днестр шывĕ урлă каçнă. Пĕр чăсри боецсем гитлеровецсене хăйсем патне сывлăхах янă та пулеметсемпе тата миномётсемпе пеме пуçланă. 38 гитлеровеца вĕлернĕ. Икĕ нимĕçе тыткăна илнĕ.

* * *

Витебск хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тăшмана хирĕç сайра-хутра артиллерирен тата пăшалсемпе, пулеметсемпе персе тăнă. Пирĕн артиллеристсем нимĕçсен 4 туппине, 7 пулеметне пĕтерсе тăкнă. Пĕр чăсри 8 снайпер юлашки кунсенче 57 гитлеровеца вĕлернĕ. Снайпер Федор Исаев 12 нимĕçе вĕлернĕ, снайпер Иван Пичугин 9 нимĕçе, снайпер Петр Чагин тăшманăн 7 салтакне вĕлернĕ.

Пирĕн штурмовик-«охотниксем» пĕр чугун çул станцийĕнче нимĕçсен горючи турттарса пыракан эшелонне сунтарса янă.

* * *

Сурçĕрте пĕр подразделени тăшманăн тĕреклетнĕ пунктне атакăланă. Çак тери сасартăк тапăннинчен хăраса ÿкнĕ нимĕçсем вăйлăнах хирĕç тăрса çапăçма пултарайман. Калистратов лейтенант командир пулса ертсе пыракан боецсем темиçе вунă гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, унтан вĕсем темиçе нимĕçе тыткăна илнĕ те хăйсем тăнă вырăна аванах тавăрăннă.

* * *

Витебск облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ çĕрле пĕр ялта 20 гитлеровеца вĕлернĕ тата 27 автомашина пĕтерсе тăкнă. Пăшалсемпе, пулеметсемпе персе, нимĕçсен «Юнкерс-87» йышши бомбардировщикне çĕмĕрнĕ. Самолетăн ирĕксĕрех партизансем тăракан вырăна анса ларма лекнĕ пулнă. Партизансем самолет çинчи пулеметсене тата радиостанцине илнĕ, бомбардировщикне çунтарса янă. Вилейка сывăхĕнчи партизансен отрячĕ çул хĕррипче засадăра ларнă. Çулпа пĕр рота нимĕç пынă. Совет патриочĕсем тăшман разведкине хăйсенчен ирттерсе янă та пăшалсемпе тата пулеметсемпе вăйлăн пеме пуçланă. 40 нимĕç салтакне вĕлернĕ е амантнă.

* * *

Яссы хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри тата çурçĕртерехри районра тыткăна илнĕ тăшман салтакĕсемпе офицерĕсем каласа панă тăрăх, нимĕçсемпе румынсен çарĕсем юлашки çапăçусенче питех пе йывăр сухатусем тÿснĕ. Эсэсовецсен «Аслă Германи» ятлă танковăй дивизийĕнчи 2-мĕш мотополкăн 10-мĕш ротин тыткăна лекнĕ командирĕ лейтенант Ганс Эвид çапла каласа панă: «Нимĕçсен командованийĕ пысăк мар участокра йышлă çар пухса тăратрĕ. Танк тата пехота соединенийĕсене çакăн пек приказ пачĕç: сасартăк тата хăвăрт пырса çапса, вырăссен оборона линине татмалла та вырăссен чăсĕсене Прут шывĕн леш енне хăваласа ямалла. Анчах та вырăссем пире хирĕç организованно та вăйлă тăчĕç. Вĕсен пуринчен те ытларах танксене хирĕç тăракан оборони питĕ хăватлă пулчĕ. Малтанхи кунсенчех çак уççăнах паларма пуçларĕ: Яссы районĕнче пуçласа янă наступлени пăчланса ларать. Вырăссен оборонине татма хăтланса, эпир темĕн чухлĕ вăй пĕтертĕмĕр. Эсэсовецсен «Аслă Германи» ятлă танковăй дивизийĕнче мĕнпур танкĕсен çуррине яхăн пĕтрĕ. Пехотăн та пысăк сухатусем пулчĕç. Сăмахран, 11-мĕш дивизири 3-мĕш полкăн 2-мĕш батальонне вырăссем пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкрĕç. Ку батальона вырăссен артиллерийĕ хытă сунтарчĕ. Çавăнта çак батальонăн 600 салтакĕпе офицерне яхăп пĕтрĕ. Румынсен 3-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 4-мĕш полкра пĕр кун хушшинче полкри салтаксен тăватă пайĕнчен виçĕ пайĕ пĕтрĕ».

ВКП(б) Мускав организаци активĕн пухăвĕ

Июнĕн 7-мĕшĕнче ВКП(б) Мускав организаци активĕн пухăвĕ пулса иртнĕ. Пухура Мускав парторганизаци умĕнче тăракан задачăсем çинчен ВКП(б) Мускав Область Комитечĕн тата Мускав Хула Комитечĕн секретарĕ **А. С. Щербаков** юлташ доклад туса панă. Ăна актив ăшшăн кĕтсе илнĕ.

Оккупациленĕ совет çĕрĕн ¾ пайне ытла фашистла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем çинчен тĕплĕн каласа панă хыççăн, Щербаков юлташ совет тылĕн ĕçне Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнче кăларнă приказра пысăка хурса хакланине аса илтерет. Халĕ, Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар умне çĕнĕ задача — амантнă нимĕç тискер кайăкне хыçранах хăваласа пырса, ăна хăйĕн шăтăкĕнчех пĕтерес задача лартнă чухне, совет тылĕн татах та вăйлăрах ĕçлесе, Хĕрлĕ Çара çав историллĕ задачăна хăвăртрах пурнăçа кĕртме пулăшмалла.

Щербаков юлташ Мускаври тата Мускав облаçĕнчи промышленность ăнăçлăн ĕçленине палăртать. Промышленность 1943 çулхи производство планне ытлашшипех пурнăçа кĕртнĕ хыççăн кăçалхи 5 уйăхри плана та ирттерсе тултарнă. Çак условисенче халĕ промышленноçăн юлса пыракан отраслĕсем çине тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Вĕсем — пир-авăр промышленноçĕ, йывăр машиностроени, миномётсем тата строительство материалĕсем тăвакан промышленноçăн чылай предприятийĕсем пулаççĕ. Хăшпĕр предприятисем таварлă продукци туса кăлармалли плана тултарнипе шăрлех, номенклатурăсем тăрăх плана тултармаççĕ. Уйрăм отраслĕсем юлса пыни халĕ, предприятисене кооперацилес ĕç анлăн саралса пынă вăхăтра, уйрăмăнах пулмалла мар. Мĕншĕн тесен пĕр-пĕр предприяти продукци кăлармалли номенклатурăна пăсни çĕршыва фронт валли продукци туса кăларас ĕçре ытти чылай предприятисене чăрмантарать.

— Промышленность ăнăçлăн ĕçлеме кирлĕ условисем,—кăтартса парать Щербаков юлташ, — вĕсем топливо, энергетика, транспорт ыйтăвĕсем пулаççĕ. Мускав çывăхĕнчи бассейнра кăмрăк кăларассине пур майсемпе те ÿстерсе пымалла. Çавна тума сăрт-ту ĕçĕсене сармалла, çĕнĕ шахтăсем, вĕсем патне пымалли çулсем, шахтăсенче ĕçлекенсем валли пурăнмалли çуртсем тумалла, подсобнăй хуçалăхсене аталантармалла тата ытти те. Вутă хатĕрлесси тата торф кăларасси пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пирĕн промышленноçăн электростанцисене вĕсен вăйне ÿстерес, оборудованисене юсас тĕлĕшпе пулăшмалла.

Щербаков юлташ ĕç тухăçлăхĕ çинчен тата ăна малалла ÿстермелли çăлкуçĕсем çинчен тĕплĕн каласа парать. Вăл, активa Ленинпа Сталин ĕç тухăçлăхĕ çĕнĕ обществăлла строй çĕнтерес тĕлĕшпе чи кирли пулни çинчен кăтартса панисене аса илтерсе, партипе правительство, промышленноçа малта тăракан техникăпа хĕçпăшаллантарса, ĕç тухăçлăхне малалла çĕклеме чи кирлĕ май туса панине палăртать. Ĕç тухăçлăхне ÿстерес задача вăрçă вăхăтĕнче уйрăмăнах паллă вырăн йышăнса тăрать. Сăмах кунта çакăн йышпа ĕçлесех фронт валли ытларах та ытларах продукци парасси çинчен пырать.

Щербаков юлташ Мускав çывăхĕнчи çĕркăмрăк бассейнĕнчи примерсемпе пирĕн промышленность аллинче ĕç тухăçлăхне ÿстермелли пысăк резервсем пуррине кăтартса парать. Мускав çывăхĕнчи çĕркăмрăк бассейнĕнчи шахтăсене халĕ нихăçанхинчен те ытларах механизациленĕ. Вĕсенче рабочисен кадрĕсем те çителĕклĕ. Çавăн пек условисенче ĕнтĕ ĕç тухăçлăхне ÿстерни кăмрăк кăларассине çĕклеме май парать.

Продукци кăларассине ÿстерме оборудованисем чăрăнса тăни, продукцие турттармалли хатĕрсем пулманни чăрмантарать. Анчах та ĕçе тĕрĕс йĕркелесен çав йывăрлăхсене сирсе пăрахма пулать. Çав йывăрлăхсене сиресси пĕтĕмпех шахтăсен, трестсен тата комбинатсен руководителĕсенчен килет.

Щербаков юлташ—ĕç укçине ĕçе шута илни тăрăх тÿлени, техника вĕренĕвне массăллăн сарса пыни, производствăра поточнăй метода анлăн сарни, оборудованисене çĕнетни, станоксен хăватне ÿстерни, инструментсен хуçалăхне лайăхлатни тата ытти çавăн пек меслетсем пурте ĕç тухăçлăхне ÿстермелли условисем пулса тăни çинчен тĕплĕн каласа парать. Çав условисемпе тата майсемпе тĕп задачăна — рабочисем сахаллăн ĕçленипех продукци кăларассине пĕрмаях ÿстерсе пымалла тăвас задачăна татса панă çĕрте туллин усă курмалла.

Щербаков юлташ продукцин хăйне лакакан хакне йÿнетес ыйтăва çивĕччĕн лартать. Хăшпĕр хозяйственниксем, вăрçă вăхăтĕнче çав ыйтупа ĕçлемесен те юрать тесе шутласа, ун çинчен манса кайнă, экономика кăтартăвĕсене пуçнăçлассишĕн кĕрешес ĕçе те сÿрĕклетнĕ. Продукци хакне йÿнетес ыйту вăл — топливо, чĕртаварсем, оборудованисем перекетлес тата продукци туса кăларнă çĕрте ĕç вăйне чакарас ыйту пулса тăрать. Çак ыйтусем вĕсем вăрçă вăхăтĕнче уйрăмăнах çивĕччĕн тăраççĕ, мĕншĕн тесен сăмах кунта çавни тонна материала перекетлесси, кашни станокпа тухăçлăн усă курасси, фронта ытларах пулăшасси çинчен пырать. Щербаков юлташ чылай предприятисен примерĕ çинче пирĕн промышленноçăн вăл тĕлĕшпе пысăк майсем пуррине, анчах халлĕхе çав майсемпе çителĕксĕр усă курнине кăтартса парать.

Малалла Щербаков юлташ ялхуçалăх ыйтăвĕсем çине куçать. Çураки ĕçĕсен итогĕсем çинчен кĕскен каласа панă хыççăн, вăл хальхи вăхăтри тĕп задача — акнă тырăсене пăхса ÿстересси, уйрăмăнах илсен, çум çумласси, тырпулсем пуçтарса кĕртмелли машинăсене вăхăтра тата лайăх пахалăхпа юсаса хатĕрлесси, тырпулсене пуçтарса кĕртме пур тĕлĕшпе те тĕплĕн хатĕрленесси пулать тесе палăртать.

Щербаков юлташ Мускав парторганизаци умне хула хуçалăхне лайăхлатас, вырăнти чĕртаварсенчен кулленхи кирлĕ таварсем туса кăларассине ÿстерес тата ĕçсыннисен пурнăçри ыйтăвĕсене тивĕçтерес енĕпе конкретлă задачăсем лартать. Ку задачăсене пурнăçа кĕртме лайăх майсем пур, ĕçĕн ăнăçлăхĕ пĕтĕмпех çав кирлĕ участоксенчи çынсем ответлăха туйса ĕçленинчен тата вĕсен пуçаруллăхĕнчен килет.

Юлашкинчен Щербаков юлташ партиллĕ-политикăллă ĕçе вăйлатас тата кадрсене идея тĕлĕшĕнчен воспитани парас ыйтусем çинче чарăнса тăрать. Вăл Сталин юлташ теори пĕлтерĕшĕ çинчен кăтартса панисене, кадрсене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен воспитани парас енĕпе тăракан задачăсем çинчен кăтартса панисене аса илтерет. Çак ĕçри çитменлĕхсене хăвăрттăн пĕтерес тесен, парти руководителĕсен, чи малтанах, хăйсен идейăпа теориллĕ тавракурăмне аслăлатассишĕн куллен тимлĕн тăрăшмалла.

— Мускав организацийĕ, — тесе пĕтерет хăйĕн докладне Щербаков юлташ, —фронта пулăшас тĕлĕшпе сахал мар ĕçсем турĕ. Йывăр кунсенче, тăшман столица патне çывхарса çитнĕ вăхăтра, Мускав большевикĕсем хăйсен пĕтĕм вăйне тата кирлĕ чухне пурнăçне те тăван çĕршыва пачĕç. Çав кунсем яланлăхах асра юлаççĕ. Совет правительстви, «За оборону Москвы» медаль туса, Мускав патĕнче нимĕç захватчикĕсене çĕмĕрсе тăкнă Хĕрлĕ Çар воинĕсен паттăрлăхне ĕмĕрлĕхех палăртса хăварчĕ. Мускав çыннисем малашне татах та ытларах вăйхăват хурса ĕçлесе, тăван çĕршыв умĕнче парăмлă пулас çукки пирки, мухтавлă Хĕрлĕ Çара боевой техника ытларах парасси пирки, ăна фронтра çĕнтерÿ тума мĕн кирлисене пĕтĕмпех парасси пирки иккĕленмелли те çук.

Сывă пултăр халăхсен тата çарăн аслă сулпуçĕ, пирĕн Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ!

Щербаков юлташăн çак сăмахĕсене тăвăллăн алă çупса кĕтсе илеççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ. Сталин юлташа саламласа тăвăллăн алă çупни нумайччен лăпланмасть.

Щербаков юлташ юлашки сăмах каланă хыççăн актив пухăвĕ, Мускав парторганизаци умĕнче тăракан конкретлă задачăсене палăртса, резолюци йышăнать.

Пуху пысăк çĕкленÿпе Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ патне çыру яма йышăнчĕ. (ТАСС).

Муркаш райсовечĕн сессийĕ

Июнĕн 8-мĕшĕнче райсоветăн черетлĕ II-мĕш сессийĕ пулса иртрĕ. Вăл икĕ ыйту—çураки итогĕсемпе уборкăна хатĕрленесе ирттерес тĕлĕшпе район умĕнче тăракан задачăсем çинчен тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕç мĕнле пыни çинчен сÿтсе-яврĕ.

Малтанхи ыйтупа райсовет исполкомĕн председателĕ Г. Федоров юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик тата прение тухса калакансем çакна палăртрĕç: район, пĕтĕмĕшпе илсен, çураки планне тултарнă пулин те, çĕрулми лартас, кантăр акас, çавăн пекех тата ферма çумĕнчи участоксене акса хăварас ĕçсене вĕçлемен-ха. Ямайкасси ялсоветĕнчи «Звезда», Пайкли ялсоветĕнчи «Зерно», Ярапайкасси ялсоветĕнчи «Коммунизм» тата Доронин ячĕпе тăракан колхозсем, туртăм вăйĕпе çителĕксĕр усă курнипе, çураки ĕçĕсене вăраха тăсрĕç. «Красная звезда», «Шупуç» «Маяк», «Çĕнĕ хунав» колхозсем çуртырисем акмалли плана кашни культура тăрăх уйрăмăн пурнăçлайман, çапла вара пуçуçаврăнăш планне пăснă, чылай колхозсенче вăрлăх участокĕсем уйăрман.

Сесси кунпа пĕрлех тырпулсене çумкурăксенчен тасатас, çуя тислĕк кăларас тата ирхи çĕртме тăвас ĕçсем районри чылай колхозсенче çителĕксĕр пынине палăртрĕ. Ирхи çĕртме тума, «Красное Сормово» ялхуçалăх артелĕсĕр пуçне, урăх пĕр колхоз та тытăнман.

Сесси çавăн пекех районри нумай колхозсем уборкăна хатĕрленес тĕлĕшпе начар ĕçленине палăртрĕ. Колхозсен руководителĕсене ку ĕçри çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме хушрĕ.

Иккĕмĕш ыйтупа СССР Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районри уполномоченнăйĕ Угольников юлташ доклад туса пачĕ.

Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлесси районра пачах та çителĕксĕр пырать. Çулталăкри плана июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне аш-какай хатĕрлес енĕпе 42 процент, сĕт-çу хатĕрлес енĕпе 11 процент, çăмарта хатĕрлес енĕпе 22 процент, çăм хатĕрлес енĕпе 14 процент çеç тултарнă. Районри 72 колхозран 15-шĕ сĕт хатĕрлеме ку таранччен те тытăнман.

Сесси ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçри çитменлĕхсене палăртрĕ, ку ĕçе хăвăртлатас енĕпе районри хатĕрлев организацисене большевикла тимлĕхпе ĕçлеме хушрĕ.

Т. ИВАНОВ.
(Хамăр корр.).

Хĕрлĕ Çар офицерĕсене, сержанчĕсене тата рядовойĕсене Совет Союз Геройĕн ятне пани

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçланăшăн тата çавăн чухне хастарлăхпа геройлăх кăтартнăшăн, СССР Верховный Совет Президиумĕн июнĕн 4-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, Хĕрлĕ Çар офицерĕсен тата сержанчĕсемпе рядовойĕсен пĕр ушкăнне, Ленин орденĕпе тата «Ылтăн Çăлтăр» медальпе наградаласа, Совет Союз Геройĕн ятне панă.

Совет Союз Геройĕн ятне мĕн пурĕ 30 офицера, сержанта тата рядовоя панă. (ТАСС).

Пирĕн укçа-тенкĕ тăшмана çĕмĕрсе тăкма пулăштăр

СĔНТĔР, июнĕн 8-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Ĕнер Шăхасанри «Колос» колхозра Саратов облаçĕнчи Ново-Покровск районĕнчи «Стахановец» колхоз членĕ Ферапонт Головатый чĕнсе каланине сÿтсе-яврĕç. Колхозниксемпе колхозницăсем тăван çĕршывăн сулăмлă патриочĕ чĕнсе каланине туллин кăмăлпа ырларĕç, хăйсем мухтавлă Хĕрлĕ Çара тухăçлă ĕçне те, укçа-тенкĕпе те пулăшма яланах хатĕр пулни çинчен пĕлтерсе каларĕç.

Çакăн хыççăн колхозра Хĕрлĕ Çар валли боевой самолетсемпе танксем тума укçа пухас ĕç пуçланчĕ. Колхоз председателĕ Кузьма Яковлевич Тямин 5.000 тенкĕ, бригадирсем А. Ельникова, И. Егоров, С. Яковлев юлташсем 1000-шер тенкĕ пачĕç. 70 çулхи колхозник фронтовик ашшĕ Харитон Мочалов 1000 тенкĕ парса çапла каларĕ:

— Эпир, колхозниксем, çĕнтерÿшĕн нимĕн те шеллеместпĕр. Пирĕн укçа-тенкĕ фашистла захватчиксене тĕпĕ-йĕрĕпех çапса аркатма пулăштăр.

Колхозра Хĕрлĕ Çар валли самолетсемпе танксем тума кĕске вăхăтрах 14.350 тенкĕ пухнă.

М. КАРПОВ.

Поляксен чăн-чăн нацилле хăватлă çарĕ

(Моравский господин ТАСС корреспондентне калани)

Польшăн наци совечĕн уполномоченнăйĕсем июнĕн 5-мĕшĕнче, поляксен 1-мĕш армийĕн чаçĕсенче пĕр эрне пурăннă хыççăн, Киева тухса кайнă. Аэродромра вĕсене генерал-лейтенант Берлинг, генерал-майор Завадский тата ыттисем те ăсатнă. Делегаци пуçлăхĕ Моравский господин аэродромран вĕçсе каяс умĕн ТАСС корреспондентне çапла каланă:

— Эпир Совет Союзĕнче поляксен армийĕ пуррине пĕлнĕ, анчах та эпир ун çинчен питĕ сахал пĕлнĕ. Халĕ эпир поляксен армийĕнче хамăр пултăмăр, унăн çав тери чаплă çыннисене куртăмăр, вĕсемпе калаçрăмăр. Эпир çĕр пин çынна яхăн тăракан ,питĕ лайăх хĕçпăшалланнă çара куртăмăр. Унăн боецĕсемпе офицерĕсем ÿт-пÿпе сывлăх енчен питĕ çирĕп, вĕсем лайăх тăранса пурăнаççĕ, тăшманпа кĕрешме хатĕр тăраççĕ. Çапăçăва халлĕхе хутшăнман чаçсенче час-часах çакăн пек ыйтаççĕ: «Хăçан пире çапăçăва кĕртсе ярĕç-ши?» теççĕ. Çав салтаксем хăйсем çапăçма пуçламан пирки çеç кăмăлсăр тăраççĕ.

Пире поляксен Берлинг генерал ертсе пыракан 1-мĕш армийĕн мĕнпур чаçĕсене кайса курма май пачĕç. Эпир пехотнăй дивизисенче, артиллери чаçĕсенче, çав штутра йывăр тупăсен бригадинче те, пултăмăр. Эпир танковăй тата противотанковăй подразделенисенче, хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсен чаçĕнче пултăмăр. Эпир пур çĕрте те салтаксемпе тата офицерсемпе калаçрăмăр.

Поляксен армине Совет Союзĕнче çапăçу техникипе çав тери лайăх хĕçпăшаллантарнă, халиччен Польшăн нимĕнле çарĕ те нихăçан та ун пек лайăх хĕçпăшалланман. Вăл поляксен чăн-чăнах нацилле армийĕ пулса тăрать, вăл патриотла туйăмпа çунса тăрать, вăл паляк халăхне ирĕке кăларассишĕн çапăçма пуçласшăн. Салтаксен çав патриотла туйăмĕ пĕчĕк япаласенче те палăрать. Землянкăсене наци флагĕсемпе, поляксен геройĕсен портречĕсемпе, лозунгсемпе илемлетнĕ.

Салтаксен театрĕнче, поляк боецĕсен художествăллă пултарулăхĕнче эпир çакна куртăмăр: салтаксем хăйсен тăван çĕрĕшĕн, Варшавăшăн, Краковшăн, Польшăн кашни кĕтессишĕн çав тери тунсăхлаççĕ.

Поляксен армийĕпе Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем хушшинче питĕ çирĕп туслăх пулса тăнине эпир кашни утăмрах куртăмăр. Çакă вăл боецсем пĕр-пĕрне кĕтмен çĕртен хирĕç пулнă чухне те, поляк чаçĕсемпе Хĕрлĕ Çар чаçĕсем пĕр-пĕрне хирĕç пулнă чухне те палăрать.

Пур боецсем те хăйсене чаплă хĕçпăшал панăшăн Совет правительствине тав тăваççĕ, çав хĕçпăшалсемпе усă курса, вĕсем Хĕрлĕ Çарпа пĕрле гитлерла захватчиксене хирĕç кĕрешеççĕ.

Пире, кĕрешекен Польшăн представителĕсене, кунта питĕ савăнса кĕтсе илчĕç, пур çĕрте те саламларĕç.

Поляксен Совет Союзĕнчи армийĕн салтакĕсемпе офицерĕсем Польшăн наци совечĕ тăван çĕршыври тата эмиграцири пур поляксене те пĕрлештерме пултаракан орган тесе шутлаççĕ, вĕсем наци совечĕ майлă тăраççĕ.

Поляксен армийĕн салтакĕсемпе офицерĕсем хăйсен командующине Берлинг генерал-лейтенанта питĕ юратаççĕ (Берлинга Польшăн наци совечĕ пĕрремĕш класс «Грюнвальд хĕресĕ» ятлă орден панă), çавăн пекех вĕсем Завадский, Сверчевский генералсене тата ытти командирсене те юратаççĕ. Поляксен армийĕн боецĕсем Хĕрлĕ Çарăн Верховный Главнокомандующине Сталин Маршала питĕ хĕрÿллĕн юратса тав тунине эпир хамăр куртăмăр. Польшăшăн çав тери тăрăшнăшăн эпир ăна хамăр салтаксемпе пĕрле питĕ хытă тав тăватпăр».

Действующи арми, июнĕн 7-мĕше.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АСС Республикинчи вырăнти промышленноçри, апат-çимĕç тата аш-какайпа сĕт-çу промышленноçĕсенчи, промысла коопераципе инвалидсен кооперацийĕнчи уйрăмах палăрнă рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградаласси çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ „Чăваш Коммунин" 109-мĕш, 110-мĕш, 111-мĕш тата 112-мĕш номерĕсенче).

111. Нина Ивановна **Комиссаровăна** — Октябрьски районри «Большевик» промартелĕн çĕвĕçне.
112. Федор Иванович **Коновалова** — Шупашкарти «Красный мебельщик» промартелĕн цех мастерне.
113. Антонина Ильинична **Королевăна** — Сĕнтĕрвăрри райпромкомбиначĕн çĕвĕçне.
114. Григорий Корнилович **Корнилова** — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Астакассинчи «Лесоруб» промартель председательне.
115. Алексей Федорович **Кочукова** — Улатăрти «Союз инвалидов» промартелĕн столярне.
116. Прасковья Васильевна **Корякинăна** — Пăрачкаври Папанин ячĕпе тăракан пулă тытакан колхозăн Сăр çинчи звеньевойне.
117. Алексей Прокопьевич **Красильникова** — Сĕнтĕрвăрри райпромкомбиначĕн тимĕрçне.
118. Иван Федорович **Красильникова** — Сĕнтĕрвăрринчи «Крестьянский кузнец» промартелĕн тимĕрçине.
119. Виктор Владимирович **Краснова** — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Красный кузнец» промартелĕн тимĕрçине.
120. Николай Филиппович **Краснова** — Куславкка райпромкомбиначĕн обозникне.
121. Иван Григорьевич **Кручинина** — Улатăрти кирпĕч завочĕн мастерне.
122. Михаил Иванович **Куданова** — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Крестьянский кузнец» промартелĕн бригадирне.
123. Степан Романович **Кудряшова** — Первомайски районри «Коммунар» промартельти катка-пичке тăвакана.
124. Агафия Кузьминична **Кузьминана** — Шупашкарти сăра завочĕн смена мастерне.
125. Ксения Лукинична **Кузьминана** — Елчĕк районĕнчи «Пахарь» промартелĕн бригадир-техноруктне.
126. Федосия Кузьминична **Кузьминана** — Шупашкарти кирпĕч завочĕн работницине.
127. Ксения Ивановна **Кузнецовăна** — Етĕрнери çу завочĕн сĕт пухаканне.
128. Мария Петровна **Кузнецовăна** — Комсомольски районри Чайковский ячĕпе тăракан промартелĕн çĕвĕçне.
129. Антонина Александровна **Курбатовăна** — Ишлей районĕнчи «Гвардия» колхозăн сĕт пухаканне.
130. Анна Николаевна **Кучинскаяна** — Улатăр районĕнчи «Красная Звезда» промартелĕн правлени председательне.
131. Вера Александровна **Курапинăна** — ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн инструкторне.
132. Александра Семеновна **Лагутинăна** — Шупашкарти выльăх-чĕрлĕхсем пусмалли пунктри колбаса тăвакан цех начальникне.
133. Николай Сергеевич **Ладнова** — инвалидсен Пăрачкаври «Новый путь» промартельти карттус-çĕлĕк çĕлекен мастера.

(Малалли пулать)

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ПАТТĂРĔСЕМ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Невель районĕнче пĕр çапăçура командира амантнă пулнă. Пулемет ротин гварди старшини **И. Разумов** çав командира çапăçу хирĕнчен йăтса тухнă та унăн подразделенине ертсе пырас ĕçе хăй çине илнĕ.

Разумов юлташа **«Хастарлăхшăн»** медальпе икĕ хут наградаланă.

Вăрçăччен вăл Шупашкар хулинче ĕçленĕ. Вăл — чăваш.

Ÿкерчĕк çинче: гварди старшини **И. Разумов.**

В. ГРЕБНЕВ
фотоÿкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

БАТАРЕЯ КОМАНДИРĔ РЯЗАНОВ

Фронтран килекен кашни çыру, унта темиçе сăмах çеç пулсан та, пирĕн тăван çĕршыва нимĕç оккупанчĕсенчен тасатассишĕн пыракан аслă вăрçăра совет салтакĕсемпе офицерĕсен хастарлă та хăюллă ĕçĕсене кăтартса парать.

Манăн умра, акă, пĕр пĕчĕк çыру. Ăна полк командирĕ — майор Кодяков Н-ски заводра ĕçлекен Ярославцева юлташ патне янă:

«Сирĕн çырăвăра илнĕ хыççăн, эпĕ çакна пĕлтерес терĕм: сирĕн упăшкăр ст. лейтенант Михаил Васильевич Рязанов манăн полкра—батарея командирĕ.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç вăл хăюллă та паттăр çапăçать.

Боевой заданисене кăтартуллă пурнăçа кĕртнĕшĕн Рязанов юлташа «Хĕрлĕ Çăлтăр» тата «Александр Невский» орденĕсемпе наградаланă».

Михаил Васильевич Рязанов — чăваш халăхĕн ывăлĕ. Вăл Элĕк районĕнчи Элекейкино ялĕнче çуралнă. Хусанти строительнăй институтран вĕренсе тухнă та Канашри вагонсем юсакан завод строительствинче, Канаш — Шупашкар чугун çул строительствинче, пирĕн республикăри пĕр пысăк завода тунă çĕрте, 1941 çул кĕркунне пĕр оборона рубежне тунă çĕрте главнăй инженер пулса ĕçленĕ.

Рязанов юлташăн боевой ĕçĕсем 1942 çулта, февраль уйăхĕнче, пуçланнă.

Çулталăк хушши ытла вăл, Орел хули çывăхĕнче нимĕçсен атакисене сирсе-сирсе ярса, тăшмана пĕр утăм та малалла кайма памасăр тытса тăнă.

1943 çулта нимĕçсен çуллахи наступленине пĕтĕмпех сирсе пăрахса, Хĕрлĕ Çар фашистла нимĕç захватчикĕсене сывлăш çаврăма памасăр Хĕвеланăçнелле хăваласа тытăннă. Çак вăхăтра ĕнтĕ Рязанов юлташ, хăйĕн батарейипе малти эшелона тухса, Белгородпа Сумы хулисене ирĕке кăларассишĕн çапăçать, Днепр шывĕн сулахай çыранне Гитлер йыттисенчен тасатать.

Сентябрĕн 22-мĕшĕнче пирĕн разведка çĕпĕ хыпар тупса килнĕ: Хĕвеланăç еннелле чакакан тăшман, фронт линийĕ тепĕр енче, пĕр 30 километр шаларах, темиçе пин пуç ĕне-выльăх Германие хăваласа каять. Çав выльăха туртса илме Рязанов юлташ подразделенине хушаççĕ. Вăл çав каçах хăйĕн подразделенийĕпе 45 километр шала кĕрсе кайса, тăшмана тылран пырса тапăнать те, ирхине пĕр яла ирĕке кăларса, темиçе çĕр ĕне-выльăха туртса илет. Çак задачăна кăтартуллăн пурнăçланăшăн ăна «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕпе наградаланă.

Рязанов юлташшăн иртнĕ çулхи чи паллă кун вăл — ноябрĕн 6-мĕшĕ. Çак кун вĕсен полкĕ, Хĕрлĕ Çарăн ытти чаçĕсемпе пĕрле, Русĕн чи авалхи столицине —Киев хулине ирĕке кăларассишĕн çапăçса уйрăмах палăрнă.

Тепĕр темиçе кунран вĕсен полкĕ татах та тепĕр хут — Житомир хулине ирĕке кăларассишĕн çапаçса уйрăмах палăрнă.

Нумай та пулмасть-ха, нимĕçсем пирĕн рубежсем çине контратакăсем тума тытăннă. Пирĕн пехотăн кăшт чакма тивнĕ. Рязанов юлташ хăйĕн батарейипе пĕр утăм та чакман. Унăн батарейи çине тăшманăн 37 танкĕ, 13 бронетягачĕ, мотопехоти пырса тапăнса, çапăçу пуçланса янă. Сехет çурă хушши пынă çак танмар çапăçу. Рязанов юлташăн батарейи тăшманăн 12 танкне персе тивертнĕ, 70 фрица автоматсенчен персе вĕлернĕ, нимĕçсен контратакине путлантарса лартнă.

Çак хăюллă та паттăр ĕçшĕн Рязанов юлташа Хĕрлĕ Ялав орденĕ памалла тунă.

Н. СТЕПАНОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Пуçламăш парторганизаци вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче пирĕн коммунистсем умĕнче пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Вĕсен хисеплĕ тивĕçĕ. — Хĕрлĕ Çар валли апат-çимĕç, промышленность валли [illegible] тăрăшса пулать.

Пирĕн Çакăшни районĕнчи Айкăш ялсоветĕнчи пуçламăш парторганизацинче халĕ пурĕ 12 коммунист. Коммунистсем пурте ответлă вырăнсенче. Икĕ коммунист колхоз председателĕ пулса, пĕр коммунист колхоз председателĕн заместителĕ, тепĕр коммунист ферма заведующийĕ пулса ĕçлеççĕ. 1944 çулта пирĕн парторганизаци ВКП(б) ретне çĕнĕрен 6 çынна, вăл шутран парти членне 4 çынна, парти членне кандидатне икĕ çынна илчĕ.

Пуçламăш парторганизаци пĕрлештерсе тăракан коммунистсене пурте ĕçре пример пулма хатĕрлерĕç. Коммунистка Марфа Кириллова колхоз çуракин вăхăтĕнче суха тунă çĕрте ĕçлерĕ, нормăна кулленех иртерсе тултарчĕ. ВКП(б) членĕн кандидачĕ, Айкăшри Киров ячĕллĕ колхоз председателĕн заместителĕ [illegible] колхоз юлташ [illegible] бригадире пулса ĕçлерĕ. [illegible] Коммунист Е. Прокопьев юлташ [illegible] нормăна [illegible] тултарчĕ. Христина Прокопьева юлташ то бригадир пулса ĕçлет, лайăх тĕслĕх кăтартрĕ.

Пуçламăш парторганизаци коммунистсен производствăра лайăх тĕслĕхĕсем кăтартса ĕçленипе çеç çырлахса ларман. Парторганизаци колхозри ĕçсемпе ответлă тăрăх пулса тăрать. Унăн тивĕçлĕ тивĕçĕ — колхозниксене колхозсенче вăйлă тырпул [illegible] мобилизацилесе пулать. Çавна эпир лайăх ăнланса тытатпăр.

Çуракине хатĕрленнĕ вăхăтра пирĕн пуçламăш парторганизаци çак ыйтăва коммунистсен пухăвĕнче сÿтсе-явре. Ун хыççăн колхоз колхозсенче ăнлантарса ĕçне пухусем ирттертĕмĕр. Колхозниксемпе [illegible] пухусенче колхозсенче активистсем хăйсене çине тăлăк обязательствăсем илчĕç. Кашни активиста уйрăм участок çумне çирĕплетрĕмĕр. Кун хыççăн коммунистсен [illegible] хушшинче массăллă-ăнлантару ĕçне анлăн сарса ячĕç. Вĕсем Сталин юлташăн приказĕсене, партипе правительство йышăннă постановленисене ăнлантарса па-

кĕç. Пирĕн ялсоветри колхозсем çуракине пур енĕпе те тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илчĕç.

Колхозсенче, пуçлăхсем пулса, хĕрарăмсем çамрăксем ĕçлерĕç. Вĕсем ĕç сынавне чыслăн тытрĕç. Çавăнпа та пуçламăш парторганизаци 3 колхозра кружоксем организацилерĕ. Кружокра вĕренсе тухнисем çуракин вăхăтĕнче суха тунă çĕрте, яровизаци ĕçĕнче ответлă ĕçсенче ĕçлерĕç. Пирĕн ялсоветри виçĕ колхоз та çуракине срокчен лайăх пахалăхпа вĕçлерĕ. Уйрăмах Киров ячĕпе тăракан тата «Чăваш Коммуни» колхозсем лайăх ĕçлерĕç. Çуракки ĕçĕсем пынă вăхăтра колхозсем фронтовиксен çемьисене пысăк пулăшу парчĕç. Вĕсене çĕр улми, тыра вырлăх-чĕрчун пулăшрĕç.

Çуракин вăхăтĕнче колхозсенче кăлмассăвăй ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе пуçламăш парторганизаци агитколлектив йĕркелерĕ. Агитколлектив пурĕ 28 агитатор пур. Вĕсем звенопа колхозниксемпе пупле, партипе правительство постановленийĕсене ăнлантарса пачĕç. Агитаторсем хушшинче «Красный путиловец» колхоз колхозникĕсене [illegible] чĕнсе калани сÿтсе-явăнчĕ. Агитаторсем тырпул хатĕрленес ĕçре пулăшрĕç, листоксем кăларса тăчĕç.

Анчах пуçламăш парторганизаци ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур. Пĕр çитменлĕх — вăл парторганизаци хушшинче ĕçсене ăнлантарса сахал пулни. Пуçламăш парторганизаци агитаторсемпе семинарсем сахал ирттерет. Коммунистсен пĕлĕвне ÿстерес ĕçе те пысăк тимлĕх уйăрмасть. Комсомол организацийĕсемпе ĕçлес ĕçре те çитменлĕхсем пур. Çак çитменлĕхсене пĕтерсе, пуçламăш парторганизаци ĕçне çавăн пек тăвассишĕн кĕрешетпĕр те.

ЛАСТОЧКИНА,
Айкăшри пуçламăш парторганизацин секретарĕ.

Республика уйхирĕсенче

Хĕрÿллĕ ĕç чарăнмасть

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, июнĕн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Çуртырисем лайăх шăтрĕç, тикĕс те пĕр харăс ÿсеççĕ. Кашни колхозрах çум çумлас ĕç анлăн пырать.

— Тырăсем çинче çумкурăкне выран памастпăр, — теççĕ колхозниксем. Паянхи кун тĕлне районĕпе 1.200 гектар ытла çумланă.

Колхозсенче çавăн пекех пахча-çимĕç, махорка лартас ĕçсем те авăн пыраççĕ. Калинин ячĕпе тăракан колхозра 10,2 гектар купăста лартнă. Çак колхозрах çĕртме тумалли вырăна 500 лав тислĕк кăларнă, 40 гектарне сухаланă. Пахча-çимĕçсене шăварма шыв кирлине шута

илсе, колхоз икĕ пĕве тунă. 20 гектар çинчи çуртырисене апатлантарнă.

«Малалла» колхозра та ĕçсем ăнăçлă пыраççĕ. Кунта маларах ăкнă 20 гектар çуртырри çинчен çумсене тасатнă. Çĕртме тăваççĕ тата махорка лартаççĕ. Колхозниксем тырпула уйхиртен пухса кĕме тимлĕн хатĕрленеççĕ. Çĕнĕрен 300 михĕ туяннă, тыр вырмалли машинăсем валли запаслă пайсем çителĕклĕх хатĕрленĕ, 30 стан урапа юсаса хунă.

— Гитлерла çара çĕмĕрсе тăкас вăхăт çывхарса килнине кура, колхозра ырми-канми ĕçлесе, Хĕрлĕ Çара пулăшасшăн тăрăшатпăр, — теççĕ колхозниксем.

С. ШАДИН.

Çурхи тырăсем лайăх ÿсеççĕ

ВĂРНАР. (Хамăр корр.). Пумай колхозсем кăçал çуртырисене вăхăтра, агротехника хушнă пек акса хăварчĕç. Ăна халь кашни колхоз уйхирĕнчех курма пулать. Ăçта пăхатăн — унта тырăсем тип-тикĕс, лайăх ÿснине куратăн.

«Победа» колхоз (председателĕ Андреев юлташ) кăçал 348 гектар вырăнне 368 гектар акса хăварчĕ. Пĕтĕм çĕр лаптăкĕ çине кунта яровизациленĕ вăрлăха сеялкăсемпе акнă. Калчасене шăтнă хыççăнах апат панă. Савăнмалла халь колхозăн уй-хирне тухсан: пур йышши тырăсем те пĕр пек, тип-тикĕс ÿсеççĕ. Вĕсем çинче пĕр çумкурăкĕ те курăнмасть.

Сталин ячĕпе тăракан, «1-се Мая», Киров ячĕпе тăракан, «Гигант» тата ытти чылай колхозсен уй-хирĕсенче те çуртырисем лайăх çитĕнеççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсене вăхăтра, агротехника хушнă пек акнă. «Гигант» колхоз 437 гектар çине вăрлăхсене пĕтĕмпех яровизацилесе тата имçамсемпе чÿхесе акнă, çуррине ытла машинăпа акса хăварнă.

Халĕ уйрăм колхозсем калчасем çинчи çумкурăксене çумлама тытăнчĕç. «Победа» колхоз членĕсем 25 гектар калчине çумкурăкран тасатрĕç. Сендимиркинăри «Гигант» колхоз членĕсем 100 гектар ытла çумланă

Х. ЛИСИН.

Кок-сагыз лартса ÿстерекенсен республикăри канашлăвĕ

Çак кунсенче Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ кок-сагыз лартса ÿстерекенсен республикăри канашлăвне туса ирттерчĕ. Канашлура ВЛКСМ райкомĕсен секретарĕсем те пулчĕç.

Канашлу кок-сагыз акнин итогĕсемпе ăна малашне пăхса çитĕнтересси çинчен Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн главнăй агрономĕ А. Беляев юлташ тунă доклада тата кок-сагыз вăрлăхĕпе упăлĕ тымарне çитĕнтересси çинчен «Раскаучук» Чăваш конторин управляющийĕ Ефимов юлташ тунă доклада итлерĕ.

Докладсене итленĕ хыççăн кок-сагыз лартса ÿстерекенсем ака ĕçне мĕнле ирттерни çинчен тата халĕ кок-сагыз мĕнле çитĕнни çинчен каласа пачĕç. Елчĕк районĕнчи агроном Никитин юлташ кок-сагыз акас пирки колхозниксем мĕнле ĕçлени çинчен каласа пачĕ. Вăрлăхсене пĕтĕмпех стратификацилесе, машинăпа акнă. Вĕсем халĕ пур тĕлте те шăтнă, лайăх ÿсеççĕ. Кок-сагыз акнă участоксене пĕтĕмпех çумкурăкĕсенчен тасатнă.

Йăран хушшисене иккĕмĕш хут кăпăшкалатнă. — Лайăх шăтман вырăнсене пирĕн колхозниксем майăн 20-мĕшĕччченех çĕнĕрен акса пачĕç, — тет Никитин юлташ. Никитин хыççăн, Корнилова (Канаш), Сигарева (Çĕрпÿ), Перьев (Комсомольское), Королева (Первомайское), Михайлов (Тăвай) юлташсем тухса калаçрĕç. Осипов (Красноармейское) иртнĕ çул уйрăм колхозсем кок-сагыза хисеплеменни çинчен каларĕ. Кок-сагыза пурĕ 68 колхоз акнă, кашни колхозрах уйрăм звенесем тунă. «Прожектор» колхозра Петрова юлташ ертсе пыракан звено уйрăмах лайăх ĕçлет.

Анфоров юлташ Чурачăк районĕнче кок-сагыза пăхас ĕç мĕнле тăни çинчен каларĕ. Ун хыççăн Федотов (Шăхасан), Скворцов (ВЛКСМ Красноармейски райкомĕ), Фурман (главрасткаучук) юлташсем тухса калаçрĕç. Вĕсем лартнă кок-сагыза пăхса çитĕнтерес тата вăрлăхсемпе тымарсене ăнăçлă пухса илес тĕлĕшпе конкретнăй обязательствăсем йышăнчĕç.

Хурт-хăмăр ăстаçи Леонтий Никонов

КАЛИНИНО. Алгазинăри «Чăваш Коммуни» колхозăн членĕ Никонов юлташ колхоз пуçланнăранпах хурт-хăмăр пăхас ĕçре ĕçлет. Малтанхи вăхăтра утарта рамăллă вĕлле 40, каскаллă вĕлле те 40 пулнă. «Вĕлле хурчĕ-ылттăн хурт. Ăна лайăх пăхсан—тулăш илетĕн, пăхма пĕлмесен — нимĕн те илейместĕн» тет халăх сăмахĕ. Çакна Никонов юлташ яланах асра тытнă. Хурт-хăмăр çинчен çырнă кĕнекесене вуланă, вĕреннĕ. Кĕнекесенче кăтартнă пек ĕçленĕ. Кунсăр пуçне, вăл Мускаври пчеловодство техникумĕнче заочно вĕреннĕ.

Пĕлсе ĕçленĕрен унăн утарĕнче вĕллесен йышĕ çултан çулах ÿссе пырать. 1943 çулхи кĕркунне тĕлне вĕсен йышĕ 250 çитнĕ. Вăл хисепрен 41 çемьене пĕлтĕр Никонов искуственнăй майпа çăвăр ярттарса хутшăнтарнă.

Хурт-хăмăр ăстаçине Никонова çак ĕçре 5 çын пулăшать. Вĕсем унран вĕренсе, хурт-хăмăр пăхас ĕçе хăнăхса пыраççĕ. И. Кириллов, Л. Прокопьев тата Е. Димитриев юлташсем вĕренсе çитрĕç те ĕнтĕ. Вĕсем хуртсене хăйсем тĕллĕнех пăхаççĕ. Никонов вĕсене пулăшса пырать.

Никонов кашни çулах çемьесене искуственнăй майпа çăвăр ярттарать. Çапла туни хурт-хăмăр йышне ÿстерме пулăшать. Кунсăр пуçне, вăл кашни çулах çемьесен 70 процентĕнчи амасене çĕнĕрен улăштарать, пыл хурчĕсене ама хуранĕсем тума тивĕçлĕ условисем туса пырать.

Çавна пула «Чăваш Коммуни» колхоз ытти кÿршĕри колхозсене кашни çул тенĕ пекех 10—15 хурт-хăмăр çемьи сутнă.

Иртнĕ çул Никонов кашни вĕллерен 30-шар килограмм пыл илнĕ. Колхоз пĕлтĕрпе кăçал пыл сутса 311 пин тенкĕ укçа тунă. Иртнĕ çул колхозниксемпе колхозницăсене ĕçкунĕсем тăрăх 60 пăт ытла пыл валеçсе панă. Колхоз Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă боецĕсемпе офицерĕсем валли 2 пăт пыл янă.

Хурт-хăмăр ăстаçи Никонов юлташ кăçал çемьесен йышне нихăçанхинчен те ытларах ÿстерессишĕн тата пĕлтĕрхинчен чылай нумайтарах пыл туса илессишĕн ырми-канми ĕçлет. Вăл кăçал вĕллесене вăрманта 3 утарта вырнаçтарнă. Унăн пĕр çемье те урăх çĕре вĕçсе кайса сухалмасть.

— Эпĕ кăçал кашни вĕллерен вăтам шутпа 35 килограмран кая мар пыл илме, вĕллесен йышне 50 процента яхăн ÿстерме ответлă обязательство илтĕм, — каласа парать Никонов. — Çак обязательствăна эпĕ пурнăçлатăпах, — тет.

Б. ШОРНИКОВ.

РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

ПЫСĂК ВЫЛЯВСЕМ

Республикăри предприятисемпе учрежденисенче тата колхозсенче укçапа ялаласен виççĕмĕш лотерейин билечĕсем çине вылявсем тухнине тĕрĕслеççĕ. Нумай ĕççынисем пысăк вылявсем илнине палăртнă. Çапла, Йĕпреç районĕнчи «Путиловка» колхоз членĕ Ф. Иванов юлташ (вăл лотерея билечĕсене 700 тенкĕлĕх туяннă) 10.000 тенкĕ, Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод работникĕсем Гиндес, Икамаева тата Шангин юлташсем 1000-шер тенкĕ выляса илнĕ. Лотерея билечĕсемпе 100-шер, 200-шер тата ытларах выляса илнисем вуншарăн шутланаççĕ.

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔН БРИГАДИСЕМ КОЛХОЗСЕНЧЕ

Государствăн Чăваш Академи театрĕ республикăри колхозсене виçĕ бригада янă. 1-мĕш бригадăна Чăваш АССР-ĕн тава тивĕçлĕ артисчĕ И. О. Молодов юлташ ертсе пырать. Вăл Сĕнтĕрвăрри, Куславкка, Вăрмар, Тăвай, Елчĕк, Чкаловски, Комсомольски районĕсенчи колхозсенче пулать. Иккĕмĕш бригадăна РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ Б. А. Алексеев юлташ ертсе пырать. Вăл Шупашкар, Çĕрпÿ, Чурачăк Шăхасан, Канаш, Октябрьски районĕсенче тата Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ А. Н. Угралкин юлташ ертсе пыракан бригада Вăрнар, Калинино, Элĕк, Советски, Сĕнтĕр районĕсенчи колхозсенче пулать. Бригадăсем колхозсенче сентябрĕн 5-мĕшĕччен çÿреççĕ.

Бригадăсен репертуарĕнче Н. Мранькан «Сержант Ванюшин» ятлă 5 картинлă пьеси, Глебовăн «Юлашки тĕлпулу» ятлă пĕр пайлă пьеси тата ытти чылай произведенисем пур.

КАШКĂР ÇУРИСЕМ ТЫТНА

Вăрнар районĕнчи Вăрманкасри «Самолет» колхоз членĕ П. Козлов юлташ вăрманта 7 кашкăр çури тытнă. Çавăншăн Козлов юлташа укçа тата промышленность таварĕсемпе премиленĕ.

Ют çĕршывсенче

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен Верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июнĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен Верховнăй командованийĕн штабĕ паян каçхине пичетлесе кăларнă коммюникере çапла каланă:

«Союзниксен çарĕсем хăйсем аннă районри пĕтĕм çырана тăшмантан тасатса çитернĕ, хăшпĕр тĕлте кĕпĕрсем умĕнчи укрепленисем хушшинче çыхăну йĕркеленĕ. Районăн шалтарахри вырăнĕсенче йывăр çапăçусем пыраççĕ. Июнĕн 6-мĕшĕнче каçхине тăшманăн бронетанковăй вăйĕсем Кан хули районĕнче тунă контратакăсене сирсе пăрахнă. Тăшман хирĕç тăрасси, вăл хăйĕн резервĕсене çапăçăва кĕртсе пынă май вăйланса пырать. Операцисем пуçланнăранпах çурçĕр-хĕвеланăçĕнчен вăйлă çил вĕрсе тăрать пулин те, тинĕсрен çарсем тата вăрçă материалĕсем антарасси пур районсенче те малалла пулса пырать».

Коммюникере çапла пĕлтернĕ: «Союзниксен çар карапĕсем çыран хĕррипчи линин хыçĕнче шалта ларакан объектсем çине переççĕ. Мĕнпур йышши самолетсен пысăк соединенийĕсем пирĕн тинĕçĕр çинчи тата тинĕсри вăйсене кĕрешÿре тÿрремĕнех пулăшса тăраççĕ.

Июнĕн 7-мĕшĕнче ирхине ирех авиадесант операцийĕсем анлă масштабсемпе çĕнĕрен пуçланнă: хамăрăн тинĕçĕр çинчи çарсене çапăçура кирлĕ материалсемпе снаряжени парса тăраççĕ. Паян ирхине çамăл тата вăтам бомбардировщиксем тăшманăн тыла йышлăн пухăнса тăракан çарĕсемпе вăрçă сооруженийĕсене, çапăçу пыракан районсенчи артиллери позицийĕсене тата çав районтан кăнтăралларахри чугун çул линийĕсене икĕ хутчен тÿррĕмĕнех атакăланă».

«Союзниксен авиацийĕ тăшманăн пухăнса тăракан çарĕсем, артиллери позицийĕсем тата боеприпассен склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Кăнтăрла йывăр бомбардировщиксен соединенийĕсем Кан хулинчен кăнтăрталларахри районра чугун çулсен узловой пункчĕсене атакăланă. Хÿтĕлесе пыракан истребительсем хăйсен борчĕсем çинчи хĕçпăшалсемчен пенĕ тата çапăçу пыракан районтан 40—50 миля кăнтăрталларах тата кăнтăр-хĕвелтухăçнелерехре ларакан чугунçул депоĕсем, паровозсем, нефть цистернисен составĕсем, зенитнăй артиллери позицийĕсем, радиостанцисемпе аэродромсем çине бомбăсем пăрахнă. Çарсем анакан тата çапăçу пыракан районсем тĕлĕнче сывлăшра тăтăшах патрульсем вĕçсе çÿренĕ. Тăшманăн самолечĕсем июнĕн 6-мĕшĕ чухнехинчен йышлăнрах тухнине палăртнă, вĕсенчен чылайĕшне персе ÿкернĕ».

ЛОНДОН, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсене Верховнăй командованийĕн штабĕ паян ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

«Байе хулине пирĕн çарсем йышăнса илнĕ, вĕсем çавăн пекех тата Байе — Кан чугун çулне темиçе тĕлте татнă.

Тăшман вăйлăн хирĕç тăрать пулин те, пирĕн çарсем малалла куçса пыраççĕ. Танксем тата пехота вăйлăн çапăçаççĕ. Пирĕн тинĕс çинчен тата сывлăшран антарнă десантсем хушшинчи çыхăнăва йĕркеленĕ. Пирĕн вăйсем тăтăшах ÿссе пыраççĕ. Çĕр каçиччен Германин торпеда катерĕсен соединенийĕсем пирĕн енчен татти-сыпписĕр снаряжени пырса тăнине чăрмантарма хăтланни ăнăçсăр пулнă. Йĕпер куи каçиччен союзниксен çар карапĕсем хăйсен вут-çулăмĕпе тинĕçĕр çинчи çарсене пулăшса тăнă.

Пирĕн авиаци çĕр çинчи çарсене фронтăн пур секторĕсенче те вăйлăн пулăшса тăнă».

«Бомбардировщиксем, — тенĕ коммюникере, — тăшманăн истребительнăй авиацийĕ енчен нимĕнле хирĕç тăнине те тĕл пулман. Анчах, илнĕ хыпарсем тăрăх, пирĕн истребительсем сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 64 самолетне персе ÿкернĕ, тăшманăн ытти çирĕм ытла самолетне аэродромсем çинче пĕтерсе тăкнă.

Операцисем пыракан зонăри чугун çулсем тата шоссе çулĕсем çинчи объектсем çине бомбăсем пăрахнă хыççăн, союзниксен вăтам тата çамăл бомбардировщикĕсем тăшманăн артиллери позицийĕсене, расчечĕсене, автомашинисемпе поезчĕсене пин фут çÿлĕшĕнчен пулеметсемпе пенĕ. Союзниксен истребитель-бомбардировщикĕсем тата истребителĕсем те çав тери активлăн ĕçленĕ, вĕсем штурм тăвакан районсенче разведкăра çÿренĕ, тинĕс çинчи операцисене хÿтĕленĕ, Карантанпа çурçĕртерехри тата Котантен çурутравĕ çинчи кĕперсене аялтан вĕçсе пырса атакăланă. Çыранри оборона самолечĕсем тăшманăн Бискай заливĕнчи тата Ла-Манш районĕнчи тинĕс-çар вăйĕсене атакăланă. Икĕ торпеднăй катерпа кая мар шыва путарнă.

Июнĕн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле йывăр бомбардировщиксен пысăк вăйĕсем Ашерти, Версальти, Маси-Палезори тата Париж çывăхĕнчи Жювизири чугун çул центрĕсем çине, çавăн пекех тата штурм тăвакан районран 12 миля кăнтăрталларахра пухăнса тăракан тăшман çарĕсемпе транспорчĕ çине те вĕçсе пыра-пыра тапаннă.

Транспорт авиацийĕн планерсен çав тери пысăк вăйĕсем пирĕн çĕр çинчи çарсене противотанковăй тупăсем, автомашинăсем тата чылай снаряжени ăсатса панă. Тăшман авиацийĕн пысăк мар соединенийĕсем пирĕн çарсем аннă вырăнсене вĕçсе пырса тапăнма хăтланнă. Германи самолечĕсем çĕрле Хĕвелтухăç Англи çинче пулнă».

НИМĔÇСЕН БАЙЕ РАЙОНĔНЧИ ОБОРОНИНЕ ТАТНА

ЖЕНЕВА, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Трансоцеан ятлă гитлерла агентство çакăн пек хыпар сарнă: паян ирхине Англин пысăк танковăй вăйĕсем нимĕçсен Байе районĕнчи оборона линине татнă, халĕ çав вăйсем кăнтăр-хĕвеланăçнелле куçса пыраççĕ, тенĕ.

Черчилль общинăсен палатинче тухса калани

ЛОНДОН, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, премьер-министр Черчилль паян общинăсен палатинче çапла каланă:

«Паян ирхине эпĕ вăрçă ĕçĕсем мĕнле пыни çинчен нимĕн те каласшăн мар, уйрăмах пысăк ĕç сиксе тухиччен эпĕ ун çинчен каламастăп», тенĕ. Вăл çапла каланă: эпĕ мĕн пĕлнине пурне те хаçатсенче тĕплĕн çырса пĕлтернĕ, тенĕ.

«Çак эрне пĕтиччен манăн общинăсен палатинче урăх тухса калама тивмест, — тенĕ Черчилль. — Эпĕ çакна шанса тăратăп: палата членĕсем хăйсен суйлав округĕсене салансан вĕсем кирлĕ çĕрте халăха хавхалантарĕç, вĕсем тата ĕç хăех лайăх пулса пырассине ытлашши шанма кирлĕ марри пирки те çирĕп асăрхаттарĕç, пысăк хăрушлăхсем иртсе кайрĕç пулин те, пирĕн умра питĕ пысăк йывăрлăхсем тăни çинчен астутарĕç», тенĕ.

ЧЕРЧИЛЛЬПЕ ДЕ ГОЛЛЬ ЭЙЗЕНХАУЭР СТАВКИНЧЕ

ЛОНДОН, июнĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен штабĕн малти команднăй пунктĕнче тăракан корреспондент çапла пĕлтернĕ: Эйзенхауэр генерал, Черчилль тата де Голль генерал пĕрле тĕл пулса калаçнă. Канашлура Смэтс генерал, Иден тата союзниксен çарĕсен аслă командирĕсен представителĕсем те пулнă. Канашлу хыççăн Эйзенхауэр çапла каланă: вăрçă ыйтăвĕсем пирки эпир де Голль генералпа пĕтĕмпех калаçса татăлтăмăр, тенĕ.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: американецсен 5-мĕш армийĕн çарĕсем çаплах наступлени туса пыраççĕ, вĕсем Чивита-Веккиа портне (Римран хĕвеланăçнерехре) туртса илнĕ. Разведка чаçĕсем Браччано хули патне (Римран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре) çитнĕ. Халĕ ĕнтĕ 5-мĕш арми çарĕсем Римран çурçĕртерехри Чивита-Кастелланăран çурçĕрелле саралса куçса пыраççĕ.

Акăлчансен 8-мĕш армийĕн çарĕсем тăшмана çаплах çурçĕрелле хĕссе пыраççĕ, Субиако хулине (Римран хĕвелтухăçнерехре) тата Монте-Ротондо хулине (Римран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре) туртса илнĕ.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ 1.800 вĕçев ытла тунă.

БАДОЛЬО РИМА ПЫНА

АЛЖИР, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта çитнĕ хыпарсем тăрăх, маршал Бадольо паян ирхине Рима пынă. Вăл Рима политикăллă партисен руководителĕсемпе çĕнĕ правительство тăвасси çинчен калаçма кайнă.

ФРАНЦУЗСЕН ÇАРĔСЕМ АЛЖИРТА МАНЕВРСЕМ ТУСА ИРТТЕРНĔ

АЛЖИР, июнĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Çак юлашки икĕ кун хушшинче Алжирăн хĕвеланăç пайĕнче французсен пысăк мотомеханизированнăй тата танковăй чаçĕсен маневрĕсем пулнă. Маневрсем паян пĕтнĕ. Маневрсене арми генералĕ Делаттр де Тассиньи ертсе пынă. Маневрсем пулса иртнĕ вырăнсенчи условисем Кăнтăр Францири условисемпе пĕр пекрех. Маневрсенче çар комиссарĕ Дьетельм, çавăн пекех тата США çарĕсен темиçе генералĕ пулнă.

ТУРЦИ ГЕРМАНИ СУДНИСЕНЕ ХУРА ТИНĔСРЕН ЭГЕЙ ТИНĔСНЕ КАЙМА МАЙ ПАНИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНĔ ПИРКИ

ЛОНДОН, июнĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Германин Хура тинĕсре кĕрешнĕ суднисене халь Хура тинĕсрен Эгей тинĕсне куçарни çинчен пĕлтерни Англи халăхне пăшăрхантарнă. Эгей тинĕсне кайма тухиччен çав суднăсем çинчен вĕсен хĕçпăшалĕсене илнĕ пулмалла, вăл хĕçпăшалсене тип çĕрпе янă пуль, апла пулсан вĕсемпе вăрçăра каллех усă курма май пулать. Çапла шутлаççĕ: çав суднăсем Дарданел проливĕ урлă йывăç тиенĕ суту-илÿ судниссем пек пулса кайнă пуль, теççĕ. Эгей тинĕсне çитсен вĕсем часах улшăнма пултараççĕ, унта вара Германие пысăк пулăшу пама пултараççĕ. Кунта тĕрлĕ йышши суднăсем, 40 тонна таякан суднăсенчен пуçласа 3.000 тонна таран таяканнисене çитиччен, вĕçĕ-хĕррисĕр куçаççĕ.

Монтрере тунă килĕшĕве пăснă пирки Лондонра питĕ тĕлĕннĕ, çав килĕшÿ суднăсене çавăн пек куçарма чарать. Çак ыйтăва халь Лондонра васкаса пăхса тухаççĕ.

Укерчĕк çинче: тăшманăн Европăри объекчĕсем çине бомбăсем пăрахма вĕçсе каяс умĕн акăлчансен бомбардировщикĕ патне 4 тонна таякан бомба илсе пыраççĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ КЕЛЬН ХУЛИНЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: июнĕн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен бомбардировочнăй авиацийĕн самолечĕсем Кельн хулине (Германи) тапаннă.

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, июнĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен илнĕ хыпарсем тăрăх, Югослави халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен армин Верховнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Хĕвеланăç Боснире Млинниште, Рибник, Петровац тата Пивно-Гламоч участокĕсенче çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Кунга тăшман пысăк çухатусем тÿсет. Сакăр кун хушши пынă хаяр çапăçусем хыççăн нимĕçсем Тичево хулине йышăннă. Петровац районĕнче халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен армин чаçĕсем Ключ хулине йышăннă, çавăн пекех тата тăшмантан ытти темиçе опорнăй пункта туртса илнĕ.

Хĕвелтухăç Боснире халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен армин 3-мĕш корпусĕн чаçĕсем Власеницăна тата ытти хуласене те туртса илнĕ.

ПОРТУГАЛИ ГЕРМАНИЕ ВОЛЬФРАМ ЯМА ПĂРАХНИ

ЛОНДОН, июнĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Англин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден паян общинăсен палатинче çапла пĕлтернĕ: Португали, Англи правительстви ыйтнипе килĕшсе, Германие вольфрам яма пачах пăрахрĕ.

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). США-н государственнăй секретарĕн заместителĕ Стеттиниус çапла пĕлтернĕ: июнĕн 5-мĕшĕнче Португали правительстви хăйсен çĕршывĕнчен ытти çĕршывсене вольфрам ярассине пĕтĕмĕшпех чарса лартрĕ, тенĕ.

РИМА ЙЫШĂННА МАЙ ПРЕЗИДЕНТ РУЗВЕЛЬТ ТУХСА КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, июнĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Президент Рузвельт Рима илнĕ май паян радио тăрăх тухса каланă.

«Ĕнер, 1944 çулхи июнĕн 4-мĕшĕнче, — тенĕ Рузвельт, — американецсемпе ытти союзлă çарсем Рима йышăннă. Тĕнĕл держависен пĕр столици хальхи вăхăтра пирĕн алăра тăрать».

Рим хулине нумай халăхсен хĕçпăшаллă вăйĕсем ирĕке кăларнине паллă туса, Рузвельт çапла каланă: «Тĕнĕл держависен шутĕнче тăма пăрахса, итальянецсем хăйсен çарĕсене пирĕнпе пĕрле çапăçма хушрĕç, çапла вара Итали çарĕсем те хăйсен çĕршывне пырса кĕнĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçаççĕ».

«Рим хулине союзниксен çарĕсем ирĕке кăларма пултарни,—тенĕ Рузвельт,—Гитлерпа унăн генералĕсемшĕн çав тери пысăк вырăн йышăнса тăнă, çавăнпа та нимĕçсем Рим патĕнчи фронтра юлашки чун-хавалĕ пĕтиччченех çапăçнă, çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен питех те пысăк çухатусем тÿснĕ, хăйсен хĕвелтухăçĕнчи фрончĕпе хĕвеланăçĕнчи фрончĕ йывăрлăхра тăраççĕ пулин те ку фронтра çителĕклĕ вăй тытма чăрănса тăман. Рима нимĕçсем Неаполь хулине тата Италири ытти хуласене ишнĕ пек ишессинчен çăлса хăварнăшăн пирĕн вĕсене мар тав тумалла. Союзниксен генералĕсем питĕ ăста маневрсем тунă, çавăн пирки вара нацистсем Римра ăна пысăк сиенсем тума кирлĕ вăхăт хушши тăма пултараймаи, тăнă пулсан çавăнччен вĕсем хăйсен çарĕсене унта пĕтĕмĕшпех çухатнă пулĕччĕç».

Малалла Рузвельт çапла каланă: «Эпир çак çĕнтерĕве питĕ чаплă вăхăтра турăмăр. Çав вăхăт — пирĕн союзлă вăйсем хĕвеланăç Европăра нацистсене вăйлă пырса çапма хатĕрленсе тăракан вăхăт, çав вăхăт — нацистсен ытти çарĕсем пирĕн наступление кĕтсе хăраса тăракан вăхăт, пирĕн паттăр вырăс союзниксем хăйсен вăй-халне тăшмана ытларах та ытларах кăтартса пыракан вăхăт. Вăрçă енчен кăна пăхсан эпир ĕнтĕ чылай пулать Итали кампанийĕнче хамăрăн хăшпĕр тĕп тĕллевсене туса çитертĕмĕр (сăмахран, Вăтаçĕр тинĕсри çулйĕрсене хамăр çулйĕрсен тăршшĕне кĕскетес енĕпе контрольлесе тăни, Фоджири аэропортсене тытса илни). Халĕ çав вырăнсенчен эпир континента сисмеллех пыра-пыра çапатпăр. Рима тытса илни вăрçă тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк вырăн йышăнса тăнине ытлашши хак пани аслă ĕç пулмĕччĕ. Пирĕн умра тата пысăкрах йывăрлăхсен вăхăчĕ тăрать, эпир Германине пырса кĕриччен çакăнтан та хаяртарах çапăçусем пулса иртмелли вăхăт тăрать. Нимĕçсем темиçе пин миля таран чакрĕç. Каир хапхисем умĕнчен пуçласа Ливи, Тунис, Сицили тата Кăнтăр Итали урлă чакса пыраççĕ вĕсем. Гитлеровецсем йывăр çухатусем тÿсрĕç, анчах та çав çухатусем Германие пуçĕпех пĕтерсе лартма пултаракан йывăр çухатусемех мар. Германи парăнасси патне çитнĕ теме çук-ха. Эпир Германие вăл тепĕр ăру иртсен каллех тĕнчене хăй аллине тытса илессишĕн тепĕр хут вăрçма пуçлама пултараймми пуличчен çĕмĕрсе тăкаймасха. Çавăнпа та çĕнтерÿ пирĕнтен мĕн чухлĕ те пулин аякра тăрать. Çав пĕчĕк çула эпир хăй вăхăтĕнче утса тухăпăр, ун пирки нимĕн иккĕленмелли те çук. Анчах та вăл йывăр çул, вăл пире хакла ларакан çул».

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарăн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 1—23.

НТ 00173 Типографи №1. Управлени полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 а. л. Тираж 14.400 экз.